Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

66 (7597) № ✻ Юн кун, 2008 çулхи сентябрĕн (авăн) 3-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

«Вырма-2008» конкурс пырать

## Малта пыракансем



Район администрацийĕн пуçлăхĕн хушăвĕпе ял хуçалăх предприятийĕсенчи механизаторсем, механизациленĕ тата уй-хир бригадисен ĕçченĕсем хушшинче вырма вăхăтĕнче иртterme йышăннă конкурс малалла пырать. Унта хутшăнакансем уй-хир ĕçĕсене агротехникăлла килĕшӳпе кĕске тапхăрта пахалăхлă ирттерес тĕллевпе тăрăшаççĕ.

Конкурс килĕшĕвĕпе августăн 22-28-мĕшĕсенче **АКРОС-530, ДОН-1500 класлă** комбайнсем хушшинчи ăмăртура Суворов ячĕпе хисепленекен хуçалăхри Радонеж Виссарионович Кузнецов 349 тонна тырă çапса тĕшĕлесе мала тухнă. Иккĕмĕш вырăнта – «Свобода» хуçалăхри Валерий Александрович Соловьев (315 тонна). Виççĕмĕш вырăнта – «Оринино» хуçалăхри Олег Геннадьевич Федотов (195 тонна).

**«Вектор», «Полесье», «Енисей-954» класлă** «хир карапĕсем» хушшинче Чкалов яч. хис. хуçалăхри Болеслав Николаевич Никитин экипажĕ (332 тонна) малта пырать. «Ударник» хуçалăхри Юрий Александрович Васильевпа Владимир Алексеевич Степанов экипажĕсем (157 тата 123 тонна) иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче.

**«Нива-СК-5» комбайнсемпе** ĕçленĕ çĕрте пĕрремĕш вырăна никама та паман. Иккĕмĕш вырăнта Ильич яч. хис. хуçалăхри Евгений Петрович Васильев экипажĕ (77 тонна). Виççĕмĕшĕ – «Герой» хуçалăхри Юрий Николаевич Евдокимов (75 тонна).

**«Енисей-1200» комбайнсемпе** ĕçлесе Ильич яч. хис. хуçалăхри Юрий Петрович Егоров (233 тонна) мала тухнă. Хыççăнхи вырăнта Ильич яч. хис. хуçалăхри Владислав Иосифович Аврамов (175 тонна). Виççĕмĕш вырăнта Е. Андреев яч. хис. хуçалăхри Валерий Иванович Пугачев экипажĕ (67 тонна).

**ХАМĂР ИНФ.**

Вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ

## Пĕрремĕш шăнкăрав янăрарĕ



***Каникул хыçа юлчĕ. Юсаса çĕнетнĕ шкулсем вара алăксене сентябрĕн 1-мĕшĕнче вĕренекенсем валли яри уçрĕç. Пуринчен ытла, паллах, шкула пĕрремĕш хут чечек çыххипе каякансем пăлханчĕç. Пĕлӳ тĕнчине кăçал районта 300 ытла ача çула тухрĕ. Ашшĕ-амăшĕсен, пĕрремĕш вĕрентекенĕн тата 11-мĕш класа каякансен саламлă та çав хушăрах вĕрентӳллĕ сăмахĕсене мала хурса пĕрремĕш классем «4» тата «5» паллăсемпе вĕренессе шанас килет.***

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: пĕлӳ тĕнчине – çăра уççипе.**

Райадминистрацире

## Нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн

Чкалов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕ тата хуçалăхсем хушшинчи «Моргаушская» строительство организацийĕ ыйтнисене тивĕçтерсе район администрацийĕн пуçлăхĕн кăçалхи августăн 27-мĕшĕнчи 481 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:

1. Нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн тата ял хуçалăх производствине аталантарма пысăк тӳпе хывнăшăн – **Вера Александровна ЕГОРОВАНА**, Чкалов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн тĕп бухгалтерне.
2. Строительствăра нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Маргарита Михайловна РОМАНОВАНА**, «Моргаушская» строительство организацийĕн штукатур-малярне.

Ыр кăмăллăх

## Ырă туни ырăпах таврăнать

«Пĕрлĕхлĕ Раççей» («Единая Россия») политика партийĕн аслă канашĕн председателĕ Борис Грызлов Кăнтăр Осетире пурăнакансене пулăшакансене тав тунă. Партин Чăваш регион уйрăмне янă çырура Б. Грызлов партин регион уйрăмне, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» парти членĕсемпе ун майлисене, партин гуманитари чĕнĕвне йышăннă граждансемпе организацисене, Кăнтăр Осетире пурăнакансене май килнĕ таран пулăшма кăмăл тунисене тав сăмахĕ каланă. Çырура çавна палăртнă:

«Хисеплĕ юлташсем!

2008 çулхи августăн 11-мĕшĕнче парти ертӳçисен йышăнăвĕпе Кăнтăр Осетири хирĕçтăру катастрофин пулăмĕсене пĕтерме «Гуманитари чĕнĕвне» йышăннă. Унта темиçе пин мирлĕ çын шар курнă.

Эсир пулăшнипе парти членĕсемпе ун майлисен, предприятисен, учрежденисен, обществăлла организацисен лару-тăрăвне тата май пур таран пулăшма ыйтнине тишкернĕ.

Партин регион уйрăмĕсем укçа-тенкĕ тата гуманитари хатĕрĕсем (апат-çимĕç, кĕпе-тумтир, атă-пушмак, медицина препарачĕсемпе оборудованисем, йăлара усă курмалли техника, строительство материалĕсем, донор юнĕ, шкула каймалли хатĕрсем) пухассипе, çынсене психологи пулăшăвĕ парассипе пысăк ĕç туса ирттерчĕç.

Пухнă хатĕрсем паян инкек куракансем патне çитеççĕ. Кăнтăр Осетире пурăнакансем вĕсене çак йывăр вăхăтра пулăшакансене пурне те тав сăмахĕ калаççĕ.

Партин «Гуманитари чĕнĕвне» йышăнса Кăнтăр Осети çыннисене пулăшма кăмăл тунă пур çынсене, партин пур регион уйрăмĕсене, парти членĕсемпе ун майлисене тав сăмахĕ калатăп».

**Б.В. ГРЫЗЛОВ.**

Аса илтеретпĕр. «Пĕрлĕхлĕ Раççей» партин «Гуманитари чĕнĕвĕпе» Чăваш Енре Раççей перекет банкĕн уйрăмĕсем урлă ятарлă счет çине 3 миллион тенкĕ ытла укçа куçарнă, Кăнтăр Осети çыннисем валли гуманитари пулăшăвĕн икĕ партине – пĕтĕмпе 16 тонна ытла – ăсатнă.

Районĕпе вара çак вăхăта уйрăм çынсемпе организацисем ку счет çине 65977 тенкĕ куçарса панă.

Вырмана хутшăнакан техникăпа усă курнине тĕрĕслерĕç

## Мĕн кăтартрĕ «Трактор» операци?

***Çак ыйтуран пуçларăм та эпĕ хамăрăн калаçăва патшалăх техника надзорĕн районти аслă инспекторĕпе Сергей Александрович НИКОЛАЕВПА. Унăн хуравĕ анлă та уçăмлă пулчĕ.***

– Ял хуçалăхĕнче чи хĕрӳ ĕç çи тапхăрĕ пырать – вырма. Ăна çухатусемсĕр ирттересси, кĕрхи культурăсене вăхăтра акса хăварасси – акă ял çыннин паянхи ĕç шăнăрĕ. Çак вăхăтра, паллах, ял хуçалăхĕнче тракторсемпе вĕсен прицепĕсемĕр, хăй тĕллĕн çӳрекен ытти техникăсăр ĕçсене агротехника ыйтнă пек пахалăхлă та вăхăтра пурнăçлама çук. Анчах çакна курсапĕлсе тăраканăн ку вăхăтра асăрханулăх пирки самантлăха та манма юрамасть. Ĕçсене халăх йышлă хутшăннă тапхăрта çакă уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Кăна шута илсе республикăра çулленех август уйăхĕнче «Трактор» профилактика уйăхлăх-операци ирттересси йăлара. Акă çак мероприяти хыçа юлчĕ. Мĕн кăтартрĕ-ха вăл кăçал? Асăннă тапхăрта патшалăх техника надзор инспекцийĕн ĕçченĕсем çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕпе пĕрле çынсен тата предприяти-организацисен харпăрлăхĕнче усă куракан тракторсемпе прицепсем тата хăй тĕллĕн çӳрекен ытти техника тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕ пулчĕç. Тĕрĕслевсем вăхăтĕнче техникăна техосмотр тăратнине пăхасси, юсавсăр тата учета тăратман техникăпа ĕçе тухнине палăртасси, питех те кивелнĕ техникăна учетран кăларасси малти вырăнта пулчĕ.

**– Конкретлă çитменлĕхсем мĕнлисем палăрчĕç. Çитмен пурнăçран-и вĕсем е механизаторсемпе ответлă ĕçченсен явапсăрлăхĕнчен?**

– Тӳррĕн ыйтнă ыйту çине тӳрремĕн хуравламалла пулĕ. Асăннă тапхăрта çынсен тата предприяти-организацисен харпăрлăхĕнче усă куракан тракторсемпе прицепсем тата хăй тĕллĕн çӳрекен ытти техника тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕ пултăмăр. Мĕн курăнчĕ-ха тĕрĕслевсенче? 6 хутчен çул-йĕр правилисене сĕмсĕррĕн пăсакан тракторсем куç умне лекрĕç, 8 хутчен – хăрушсăрлăх техникине пăсакансем, 5-шĕ патшалăх регистрацине тумасăр çул çине тухнă, 7-шĕ вара техосмотр правилисене пăхăнман. Камра-ха кунта айăпĕ? Хуравĕ никам каламасăрах паллă. Удостоверенисĕр (1), вăл е ку категорипе çӳреме ирĕк илмесĕр (2), регистраци документчĕсемсĕр (10), путевкăсăр (4), техосмотр тăнине çирĕплетекен талонсăр (11) çула тухнăшăн техника хуçисем айăплă. Çапла вара «Трактор» уйăхлăх-операцире 18 тракторист-машиниста, пĕр ертӳçĕне, пĕр юрлицона административлă майпа ответ тыттарма тиврĕ. Айăплисем хăйсем инкекрен çур утăмра çӳренине ăнлансa илчĕç-ши? Çакна ĕненес килет.

**– Уйăхлăх иртнипе тĕрĕслевсем вĕçленмеççĕ пулĕ-ха?**

– Çапла. Кĕрхи ĕçсем массăллă пынă вăхăтра ял çыннисемпе пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен тракторисчĕсемпе инженерисем службисем тракторсен юсавлăхĕ çине тивĕçлипе пăхасса шанас килет. Çапла пулĕ-и? Тĕрĕслĕпĕр – курăпăр.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Вырма – 2008

## Ăннă тырăна упрамалла

Çапла калатпăр та, анчах вырăнсенче ку ыйту çине часчасах алă сулса ирттеретпĕр. Пурте пĕлетпĕр, кайран чавса çывăх та çыртма çук. Пур-пĕрех...

Кăçалхи январь-июль уйăхĕсенче район территорийĕнче регистрациленĕ преступленисенчен пĕр пайĕ – ют харпăрлăха хапсăннисем. Сăмахăмăр вырма çинчен пынăран çакна та палăртмалла: вăрланă тĕслĕхсем ял хуçалăх производство кооперативĕсенче те пĕрре мар пулчĕç. Кунта вырăнсенче ĕç çине тимлĕх уйăрманни, вырăнсенче хуралсем çукки куç умне тухать. Юлашки тĕслĕхсем çинче тĕплĕнрех чарăнса тăрар-ха.

Милици сотрудникĕсем вырма вăхăтĕнче ирттернĕ çĕрлехи рейдсем çакнашкал киревсĕр тĕслĕхсене куç умне кăларчĕç:

1. Августăн 9-мĕшĕнче 22 сехет те 35 минутра Чапаев яч. хис. хуçалăхăн Отарккă йĕтемĕ çинче хурал çукчĕ.
2. Августăн 11-мĕшĕнче 4 сехет те 15 минутра çак йĕтем çинчех каллех хурал курма май пулмарĕ. Халăх пурлăхĕ хуçасăр выртнине Отарккăсем никам та курмасть теççĕ-ши?
3. Августăн 11-мĕшĕнче 4 сехет те 55 минутра хурал тавраш шăрши Ильич яч. хис. хуçалăхăн Ваçкассинчи йĕтемĕ çинче те пулмарĕ.
4. Августăн 12-мĕшĕнче 22 сехет те 45 минутра Тивĕш ялĕнчи йĕтем çинче «Рассвет» чикĕллĕ яваплăхлă общество хуралне хунарпа шырасан та тупаймарăмăр. Ăçта пытаннă вăл? Хурав пулмарĕ.
5. Тепĕр кăшт вăхăтран, 5 сехет те 15 минутра, Тивĕш ялĕнчи йĕтем çине кĕни те «Рассвет» чикĕллĕ яваплăхлă общество хуралне тупма май памарĕ.
6. Августăн 14-мĕшĕнче çур çĕр иртни 25 минутра Ленин яч. хис. хуçалăхăн Мăн Шаптак йĕтемĕ çине çитни те хуралçă ыйтăвĕ вырăнта çивĕч тăнине кăтартса пачĕ.

Вырма вĕçленмен-ха, çавăнпа хурал ыйтăвне иккĕмĕш вырăна хăварас марччĕ. Пирĕн йĕркелĕх ачамăрсем çине те ырă витĕм кӳрĕ.

**В. МАКСИМОВ,**
**çул çитмен çамрăксемпе ĕçлекен пай ертӳçи.**

К сведению граждан района!

## Проводятся публичные слушания

В соответствии со ст.28 Закона Российской Федерации от 06.10.2003г. №131-ФЗ «Об общих принципах организации местного самоуправления в Российской Федерации» и Уставами сельских поселений в июле-августе сего года будут проводиться публичные слушания по проектам генеральных планов сельских поселений.

В публичных слушаниях принимают участие граждане, постоянно проживающие на территории сельского поселения. Участники публичных слушаний вправе представить свои предложения и замечания, касающиеся рассматриваемого проекта генерального плана сельского поселения, после чего направляют его в Собрание депутатов сельского поселения для принятия соответствующего решения.

Информация о времени и месте проведения публичных слушаний будет доведена до граждан главами сельских поселений.

## Çитес çул валли çырăнтараççĕ

***Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата 2009 çулхи пĕрремĕш çур çулта илсе тăма çырăнтараççĕ. Ултă уйăха çырăнса илмелли хак – 191 тенкĕ 70 пус.***

***Хаклă вулаканăм, район хыпарçисĕр ан юлăр. Çитес çул та пĕрле пулар!***

**Райхаçат редакцийĕ.**